Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

49 (9492) № ✵ 2008 çулхи апрелĕн (ака уйăхĕн) 30-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## ЙЫВĂÇ ЛАРТ ТА СЫХЛАСА ХĂВАР

***«Вăрман – çĕршыв ӳпки, вăл лайăх ĕçлетĕр тесен кирек камăн та хăй ĕмĕрĕнче пĕрер йывăç та пулин лартмаллах», – вĕрентнĕ пире шкулта, çуркунне йывăç лартма тухнă. Ун чухне ятарлă акцисем ирттерни-не астумастăп, анчах кашни çуркунне чăрăш е хурăн лартма пĕр кун уйăраттăмăр. Халĕ республика шайĕнче «Йывăç ларт та сыхласа хăвар» акци пырать. Вăл пирĕн район территорийĕнче те вăй илет. Кун пирки тата ытти ыйтусемпе паян районти экологи хăрушсăрлăх управленийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене тăваканĕ В.В.ПЕШКОВ каласа кăтартать.***

– Çĕр çине килтĕн пулсан йывăç ларт, ывăл ӳстер, пӳрт çĕкле тесе калană ваттисем. Çакăнпа килĕшмелле. Пирĕн районта 5-6 çул каяллах çуркунне йывăç лартассине йĕркелесе янă. Çак енпе çулсерен район пуçлăхĕн йышăнăвĕ тухать, унпа килĕшӳллĕн пур ял тăрăхĕнче те, вĕрентӳ учрежденийĕнче те, ыттисенче те кĕреçепе йывăç тĕмми алла тытаççĕ.

***– Виталий Владимирович, çакă, паллах, укçа-тенкĕпе те çыхăннă. Тата кăçал йывăç лартма камсем маларах тухрĕç-ха?***

– Районта йышăнса хăварнă тăрăх, кăçал йывăç лартас ĕç валли 126 пин тенкĕ уйăрнă. Анчах та йывăçне районта ытларах та лартса хăварасшăн.

Чи малтанах район администрацийĕн специалисчĕсем алла кĕреçе тытрĕç. Вĕсем Апашра Таса Пантелеймон купелĕ патĕнче 4 пин ытла тĕм лартса хăварчĕç. Çавăн пекех район депутачĕсем иртнĕ эрнере ĕçленипе кĕçех тата 1 пин тĕмĕ йывăç вăй илмелле.

***– Ырă ĕçсен çулталăкне халалласа лартакан йывăçсене ăçтан илсе килетĕр-ха?***

– Хамăр территориех, Иккасси вăрманĕ «парнелерĕ» темелле. Хальлĕхе пĕтĕмпе 18 пин тĕм йывăç лартнă. Кунта Апаш ял тăрăхĕнчи Туçикасси ялне те асăнмалла. Вĕсем те темиçе пин тĕм йывăç лартрĕç.

***– Пур ял тăрăхĕн те йывăç лартма активлă хутшăнмалла тетпĕр. Район пуçлăхĕн йышăнăвне пурте ăнăçлă пурнăçлаççĕ-и-ха?***

– Йывăç лартассипе Атайкасси, Ишлей ял тăрăхĕсем каярах юлса пыраççĕ. Атайкассисене тасамарлăхпа та палăртса хăвармалла. Кунта субботник ирттерессине те кая хăварнă – территори çӳп-çаппа палăрать. Лайăх ĕçлекеннисен йышне Апашсене кĕртмелле, анчах вĕсем те çакна хăйсем тĕллĕн пуçармарĕç-ха. Кунта район администрацийĕн специалисчĕсем лайăх ĕçлерĕç. Шăпах ял халăхĕпе йывăç лартассине йĕркелессипе пуçлăхăн самай ĕçлемелле.

***– Нумаях пулмасть «Тăван Енре» Кӳкеçри Озернăй урамра пурăнакан 3-мĕш класа çӳрекен Кирилл Крызовăн ĕмĕчĕ пирки çырнăччĕ. Вăл хаçат урлă территорие çӳп-çапран тасатас тĕллевпе тата тавралăха илемлетессипе хăйсенчен инçех мар хурăнсем лартма кăмăл туни çинчен пĕлтернĕччĕ. Çакăн пирки мĕн калана пулăттăр?***

– Çак кунсенче Кирилăн амăшĕ пирĕнпе çыхăнчĕ. Район территорийĕнче кăçал ытларах чăрăшсемпе хырсем лартатпăр, апла пулин те çак ыйтăва кусран вĕçертмĕпĕр. Ачан ĕмĕтне татмалла мар, вăл пурнăçа кĕтĕр тесе ятарласа 50 тĕм хурăн кăларса килĕпĕр. Ку тĕлĕшпе районта йывăç лартассипе явапписем сăмах паратпăр.

***– Тавах калаçушăн.***

А.СУСМЕТ
интереслennĕ.



***Ĕç пĕрлештерет. Таса Пантелеймон купелĕ патĕнче йывăç лартнă чухне.***

**Депутатсен пухăвĕ**

## ТУПĂШ ХУШĂНСАХ ПЫРАТЬ

***Иртнĕ эрне кун Район депутачĕсен тăваттăмĕш созыври пухăвĕ черетсĕр çирĕммĕш ларăва пуçтарăнчĕ. Тăвата ыйтуран тăнă кун йĕркинчен иккĕшĕ бюджетпа çыхăннă.***

Иртнĕ çул район хыснин тупăшĕ 474065,2 пин тенкĕпе танлашнă. Налук тата налук мар тупăш хушăннă. Уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук тата муниципаллă пурлăха усă курнипе илекен пайта пĕлтĕр нумайланнă. Кун çинчен район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Н.И.Никифорова каласа кăтартрĕ.

Депутатсем муниципаллă тĕллевлĕ программа: «Çамрăк çемьесене сурт-йĕр тума 2008-2010 çулсенче пулăшасси» – йышăнчĕç. Кун пекки районта малтан та пулнă, хальйышăннинче çĕнĕлĕхрен пĕри – çамрăк çемьесен çул критерине вăтăра çитиччен мар, вăтăр пиллĕке çитиччен тăсни пулчĕ.

Район пуçлăхĕ хăйĕн вăхăтĕ çитиччен ĕç пăрахсан çав должноçе ларма конкурс ирттермелле. Ку вăл законодательство ыйтакан ялала, çавна май ăна ятарлă положени йышăнсах çирĕплетрĕç. Конкурс комиссийĕ 10 çынтан тăрать, вĕсенчен çуррине Район депутачĕсен пухăвĕ палăртать, тепĕр çуррине – республика Президенчĕ сĕннипе ЧР Патшалăх Канашĕ. Кун пек йыш вырăнти хăй тытăмлăх çинчен калакан саккунăн кусăм тапхăрĕ вăхăтĕнче пулĕ. Кайран положение улшăну кĕртме тивĕ, мĕншĕн тесен кусăм тапхăрĕ хыççăн конкурс комиссийĕн иккĕ-виççĕмĕш пайне Район депутачĕсен пухăвĕ палăртмалла, пĕрре-виççĕмĕшне – субъектăн аслă должноçри çынни.

Кандидатсене мĕнле документсем кирлине, вĕсем иккĕрен кая мар пулмаллине те палăртса хăварнă положенире.

В.ЭВЕРККИ.

## ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ, РАЙОНТИ МĔНПУР ХАСТАР ĔÇЧЕНСЕМ!

***Сире пурне те Çуркуннепе Ĕç уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.***

***Çурхи илем сирĕн чун-чĕрере ырă туйăм, хавас кăмăлпа иксĕлми хавхалану парнелетĕр, ырă ĕçсем тума хавхалантартăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр! Çак илеме упраса хăварас енĕпе пурте тăрăшса ĕçлер – тăван тавралăха çӳп-çапран тасатар, йывăçсем лартса хăварар.***

***Тулăх пурнăç, тулли те пуян сĕтел пирĕн ĕçченлĕхрен те нумай килет. Паян – хĕрӳ тапхăр, çур аки вĕçленсе пырать. Хастарлăхпа чăтăмлăх, пултарулăхпа тăрăшулăх яланах сирĕнпе пулччăр.***

***Кулленхи ĕçре пурне те хавхаланупа çитĕнӳ, кил-йышра ăнланулăхпа килĕшӳ, пурнăçра çирĕп сывлăх сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ,
Шупашкар район пуçлăхĕ.

## ĂШШĂН САЛАМЛАТПĂР!

***Çуркуннепе Ĕç уявĕ ячĕпе Сире ăшшăн тата чунчĕререн саламлатпăр! Çуркунне пирĕн пурнăça çĕнĕлĕх илсе килет, ырă ĕçсем тума хистет, чунчĕрене çĕнĕ вăй-хал тĕртсе кĕртет. Çурхи кунсен ăшши Сирĕн кăмăла лайăхлаттăр тата çĕнĕ ĕçсем тума хăват парса тăтăр. Çирĕп сывлăх, телей, çемьере килĕшӳ тата ăнăçу сунатпăр!***

«Единая Россия» политика партийĕн Чăваш Енри регион уйрăмĕ.

## ÇИТСЕ КУРНĂ

Тĕрлĕ çулта предприяти-организаци е хуçалăх ертӳçи пулса ĕçленĕ ветерансене ĕнер райадминистрацире йышăнчĕç. Тĕл пулăва вĕсен канашĕн председателĕ У.И.Иванов ертсе пычĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев районта пулса иртекен ырă улшăнусемпе паллаштарчĕ. «Ака ĕçĕ çывăх вăхăтрах вĕçленмелле, кăçал пĕр гектар пушă çĕр те пулмалла мар», – палăртрĕ вăл. Май уйăхĕнче кирпĕч завочĕн никĕсне яма пуçăнаççĕ. Ытти информаципе те паллашрĕç ветерансем.

Ĕнерех вĕсене Апашри Таса Пантелеймон купельне, «Чăваш бройлерĕ» обществăна, Шĕнерпуçĕнчи сысна комплексне, районти агротурбазăна тата «Ольдеевская» фирмăна кăтартнă.

Хамăр инф.

## ЙЫШЛĂН ХĂВĂРТ УТĔÇ

Майăн 9-11-мĕшĕнче Шупашкарта халăх нумай пуласси халех паллă. Хăвăрт утассипе Тĕнче Кубокне хутшăнасси çинчен тĕнчери 55 çĕршыв команди пĕлтернĕ те. Хальлĕхе 607 спортсменпа вĕсен тренерĕсем килесси паллă. Малтанласа палăртнă тăрăх, пирĕн командăна 31 çын кĕрет. Çавăн пекех Италирен (31 çын), Мексикăран (30), Испанирен (30), Францирен (29), Польшăран (28) йышлăн килĕç. Хăвăрт утакансен йышĕнче дебютант-командăсем те пур – Монголи, Гана, Молдова, Палестина, Марокко, Перу....

Арçынсенчен 20 километрлă дистанцие кăмăллакансем нумай иккен – хальлĕхе 109 участник çырăннă. Вăрăм дистанцие, 50 километра, парăнтарас шухăшлисем 105-ĕн. Çамрăксемшĕн те ку Тĕнче Кубокĕ пĕлтерĕшлĕ пулĕ. 61 юниорпа 51 юниорка маххă памасса шанса тăратпăр.

А.АРДАЛИОНОВА.

## МĔНЛЕ ПУРĂНАТĂН, ФРОНТОВИК?

**Василий МАТВЕЕВ (1926), Хурăнлăх:**

– Çĕршыва хӳтĕлеме 1943 çулхи октябрьте тухса кайрăм, пуйăспа пынă чухне пире тăшман самолечĕсем тапăнчĕç. Эшелон çине бомбăсем тăкăнаççĕ, ахлатса çурăлаççĕ, икĕ эрне каялла салтак тумĕ тăхăннă салтаксем çурăлнă бомбăсен хумĕпе сывлăшалла вирхĕнеççĕ... Çапла пуçланчĕ маншăн хаяр вăрçă. Темĕн те куртăм, Берлина илме хутшăнтăм... Мĕн пурăнни ку ман, аран-аран çӳретĕп.

Ю.МИХАЙЛОВ
ыйтса пĕлнĕ.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

## ФОТОАППАРАТ ТУЯННĂ

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче Шорккара пурăнакан Геннадий Гаврилович Трофимов хăйĕн ырăлăхĕпе ялти ветерансен çуртĕнче пурăнакансене савăнтарнă – 5 пин тенкĕ парса пулăшнă. «Унпа фотоаппарат туянтăмăр, – пĕлтерчĕ çурт заведующийĕ О.Н.Дмитриева. – Ветерансен пурнăçне çутатма пире питĕ кирлĕччĕ-ха вăл, халĕ çуртра пулса иртекен кашни мероприятиренех фото ӳкерчĕксем тăватпăр, вĕсене хамăр çуртра тата районта йĕркелекен куравсенче кăтартатпăр».

Кунта пурăнакансене çавăн пекех Самуккассинчи Гульсара Васильева пенсионерка 6 кĕпе парнеленĕ. Ветерансем ача пек савăннă.

Толик Хураскинчи ветерансен çуртне Мускаври социаллă университетăн Шупашкарти филиалĕн тăватă студенчĕ çĕр чавса панă.

С.СЕРЕГИН.

## ÇУРРИНЧЕН ИРТНĔ

Тунти кун тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши кулăксене районĕпе 4780 гектар акса хăварнă. Ку вăл планпа пăхнин 54 проценчĕ пулать. Уйрăм хуçалăхсенчен Куйбышев ячĕллĕ кооперативра 98 процента çитнĕ, «Чурачикское» обществăра – 72 процента, Ленин ячĕллĕ ЯХПКра – 64 процента, «Приволжское» учхозра – 62 процента.

В.ТИТОВА.

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

***Юн кун, апрелĕн 30-мĕшĕ***
уяр,
кăнтăрла +15
çĕрле +3

***Кĕçнерни кун, майăн 1-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăнтăрла +17
çĕрле +1

***Эрне кун, майăн 2-мĕшĕ***
уяр,
кăнтăрла +10
çĕрле 0

***Шăмат кун, майăн 3-мĕшĕ***
уяр,
кăнтăрла +10
çĕрле -2

# ÇĂВА ТАСА ВЫРĂН ПУЛМАЛЛА

***Православи тĕнĕ тăрăх çăва – чиркÿ хыççăн иккĕмĕш таса вырăн. Апла пулин те нумай ял тăрăхĕсенчи çăвасенче çакăн евĕр ÿкерчĕк: çÿп-çап купи, чĕркуççи таран ÿссе кайнă курăк, тÿннĕ хĕрессем.***

### ЯЛ ТĂРĂХĔСЕМ ЯВАПЛĂ

Çăвасене сыхлассишĕн, санитари нормипе правилисене тытса пырассишĕн, унти пĕчĕк пÿртсене, тытнă картасене юсаса тăрассишĕн ял тăрăхĕсем хăйсем яваплă.

Юлашки çулсенче выльăх масарĕсене тирпейлес енĕпе вĕсем тимлĕ ĕçлеççĕ темелле. Ара, саккунĕсем те çирĕпленчĕç-çке – йĕри-тавра тарăн канав чавмалла, 2 метртан кая мар карта тытмалла, йывăçсем лартса хăвармалла, хапха умĕнче асăрхаттаракан паллă пулмалла,ăшă кунсем çитсен шалта ÿсекен курăка çулмалла. Тĕрĕсех, унсăрăн Роспотребнадзорпа ветеринари службин специалисчĕсем явап тыттарма пултарĕç. 10-20 çул каялла пăрахнă мур çăви пулсан та çавăн пек çирĕп йĕркене пăхăнмалла.

Анчах хамăрăн асатте-асаннесен, атте-аннесен юлашки çула ăсаннă вырăнĕсем еплерех? Хăш-пĕр çĕре çитрĕмĕр, унта-кунта эрех ĕçнĕ хыççăн юлнă пушă савăт, çÿп-çап купи куçа тăрăнать. Выльăх çÿрекелени те пур...

### КĂКЕÇ

Иккасси еннелле каякансем кашни кунах пысăк çÿп-çап купине кураççĕ. «Шалта мар вĕт, çăвана пырса кĕриччен», – теме пăхĕç яваплисем. Анчах, каçарăр та, хăйĕн тăванне асăнма килекенĕн мĕншĕн çак каяш витĕр çÿремелле-ха? Çитменнине, йыттисем те унта кĕрт пухаççĕ. Вилнисен «ялĕнче» те ÿссе кайнă типĕ курăка пуçтарса тухсан пăсмĕччĕ. Кÿкеçсен ку çĕнни шутланать, апла мĕншĕн халех ăна «куçран вĕçертмелле»?

### ÇЫРМАПУÇ

Ку тăрăхра Иккасси çăвинче пулса куртăмăр. Иртнĕ çулхи ÿкерчĕк мар ĕнтĕ – хаçатра тухнă хыççăн пуçлăх тăрăшнă курăнать, апла пулин те кăçал та субботник туса иртерсен пăсмасть, çултаlăк хушшинче пĕрех çÿп-çап пухăнать.



Н.Фирсовапа Н.Николаев вил тăпри çине чечек лартма килнĕ.

### ШĔНЕРПУÇ

Кивçурткассинчи çăва пирки редакцие те пулăшу ыйтса пĕрре мар кĕчĕç. Пĕлтĕрхинчен нимĕн те улшăнман тесен те юрать. Çÿп-çапĕ, кĕрекен çĕре аяккипе кулаласа хунă тимĕр кивĕ палăксем, çын çÿллĕш ÿссе кайнă типĕ курăкĕ те темиçе çул каяллахиех – пурте вырăнтах юлнă. Карти те, пырса кĕрекен енчен çеç, вăл та пулин тĕл-тĕл ишĕлсе аннă, веноксене чăтайман тен...

### ÇĔНЬЯЛ

Шăмăшра шăкăрин пĕр тикĕссĕн киввине те, çĕннине те карта тытнă çăва аякранах курăнать. Таса, тирпейлĕ кунта, кивви патĕнче çеç пĕр тĕлте кивĕ веноксемпе палăксем купаланса выртаççĕ. Ытти ял тăрăхĕсенчи пек темиçе çул выртмаççĕ, кунта çăвана таса тытаççĕ. Эпир çитнĕ çĕре пĕр çемье вил тăпри патĕнче ĕçлетчĕ. Н.И.Фирсовапа унăн аппăшĕн упăшки Н.Н.Николаев амăшĕн тата шăллĕн вил тăприсене тирпейлетчĕç. «Чечексем лартса хăварасшăн. Кашни çулах тирпейлеме çÿретпĕр», – терĕç вĕсем.

### ШЕМШЕР ТАТА ТУТАРКАССИ

Çак ял тăрăхĕсенчи ялсенче пурăнакансем пĕр çăвасем патне çÿреççĕ. Анчах вĕсен иккĕшĕн территорийĕсенче те тасамарлăх хуçаланать. Темиçе çул каялла кунта çăва çуррине яхăн çунчĕ. Çак инкек çинчен çăва хĕррипе ÿсекен йывăççен вуллисем хура тăни те аса илтерет. Йăнăшсенчен вĕренетпĕр текен каларăш пур. Анчах кунти пуçлăхсемшĕн мар пулас. «Çĕр типменха, субботник тăватпăр», – терĕ çул çинче курнă Шемшерти И.П.Харитонов пуçлăх. Эпир çав вăхăтрах унта çăмăл машинăпа урапана пĕр пылчăк çаклатмасăр кĕрсе тухрăмăр. Кун пек малалла та «çĕр типессе» кĕтсен çимĕке те çак çÿп-çаппа кĕтсе илмелле пулĕ.

### АПАШ

Çăва çине пырса кĕрекен çĕрте çÿп-çап купине çунтаран пекки тунă, анчах кĕленче савăтсем çулăмпа ирĕлменнине шута илмен пулмалла. Тепĕр енчен, ячĕшĕн тесе мĕншĕн ĕçе пуçăнмалла?

А.СУСМЕТ.

---

## КИВВИНЕХ ХУТА ЯМАЛЛА

Каяшран тасатакан сооруженисем тăвас е киввисене хута ярас ыйту паян район çивĕч тăрать. Акă, Çĕньялта та ку ыйту «хĕрсе» çитнĕ. Ял пысăкланса пырать, çĕнĕ урамра вара тÿрех пур условиллĕ çуртсене çĕклеме тăрăшаççĕ: шывĕ пÿрте кĕрет тата тухать, туалечĕ, ваннăйĕ шалтах...

Ялта 160 хваттер тата 100 хуçалăх. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е.Зубков çуртра пурăнакансем канализацие усă курманнине калама тăчĕ те, ăна «Экологи» НПП» ООО пуçлăхĕ Г.Уливанов тÿрех чарса лартрĕ. «Çук, ун пек калама кирлĕ мар. Эпĕ те ялта пурăнатăп. Каяш валли шăтăк чавнă. Вăл тулса çитсен машина чĕнсе илетĕп. Ăна вăл çак нумай хутлă çуртсенчен килекен каяш шăтăкне ярать вĕт», – çакăн пек пулма пултарассине те шута илме ыйтрĕ вăл.

Çĕньялсен каяшран тасатмалли сооруженийĕ те пур, анчах хăй вăхăтĕнче кунта тĕрлĕ сăлтава пула ĕçсене вĕçлесе çитерейменнипе хута ярайман. Вăхăт иртнĕçем çулсерен юхăнма пуçлать вăл. «Çĕнĕрен сооружени çĕклесси пирки каласмалла та мар, çакнах хута ямалла», – терĕ тĕл пулăва килнĕ Анатолий Пантелеймонович. Пуçлăхсем çакна та палăртса хăварчĕç – ĕçе тăсмалла мар. Май уйăхĕн пуçламăшĕнчех кунта специалистсем шыв пăрăхĕсене тата пусăсене тĕрĕслесе тухĕç, сооруженин проектне те тупмалла. Пурте йĕркеллĕ пулсан пĕр уйăхра вăл хута каймалла.

А.АРДАЛИОНОВА.

## КĔНЕКЕ ПУХАССИПЕ - АКЦИ

Ялти вулавăшсене тухса çÿретĕн те, кунта хăш-пĕр çĕрте 80 урлă каçнă кинемисемпе мучисем те кĕнеке вуланине куратăн. Библиотекарьсем аслă ăрурисем кĕнекепе туслă пулнине палăртаççĕ. Ваттисен çурчĕсен заведующийĕсем те çакăнпа килĕшеççĕ. Анчах кĕнекисем пур çĕре те çитмеççĕ. Çавна май ЧР Сывлăх сыхлав тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хÿтлĕх пайĕ акци ирттерет: хăйсем патĕнче кашни кунах халăхран художествăлла литература йышăнать, кайран ăна ваттисен çурчĕсене салатса параççĕ.

А.АЛИНИНА.

**Ял пурнăçĕ**

## ЧАСАХ КĔТÜ ТАПРАНАТЬ...

***Çуркуннех ял çынни кĕтÿ кăларасси çинчен шутлать, анчах тепĕр чухне вăл шутланă пек пулмасть. Е кĕтÿçĕ тупаймаççĕ, е ĕçлеме килĕшмеççĕ. Вăрттăнлăх мар: кĕтÿ пăхма килĕшекенсем сахаллансах пыраççĕ. Сăлтавĕ – йывăр ĕç, касушăн пухакан ĕç укçи пысăк мар. Халĕ хулара урай шăлса та ытларах ĕçлесе илеççĕ. Çак ыйтăва Толиккассисем мĕнле татса параççĕ-ха?***

Ял çыннисемпе калаçатăп. **А.Михайлов:** «Эп хам та кĕтÿ пайтах кĕтнĕ. Маларах кĕтÿçе апат кунне виççĕ çитернĕ, халĕ кăнтăрлахи апат кăна. Ĕне пĕр касу, пăру çурри, качака çурри, 4 сурăх пĕр касу шутланать. Пĕлтĕр кашни касушăн пирĕн ялсем 100 тенкĕ тÿлеме йышăннă, Чăрăшкассисем – 160, Апашсем – 180».



*Толиккассинчи Н.Николаева кĕтÿçĕ.*

**Елизавета Константинова, ĕç ветеранĕ:** «Ял кĕтĕвне пăхас текенсем çукрах. Арçын вĕçне юлтăмăр, пĕр-ик çул хĕрарăма – Нина Николаева пенсионеркăна – шанатпăр. Тăрăшсан пултарать-ха, ĕçлетĕрех тетпĕр, мĕнле ĕнтĕ... Халăх шанăçне тÿрре кăлараять-и?..»

Урамра пĕр-иккĕн сăмах вакланине илтсе картишĕнчен малтан мучи, хыççăн карчăкĕ тухрĕ. «Толиккассин ял хапхисем юхăннă, вĕсене çĕнетмелле, – **терĕ старикĕ.** – Вĕсемсĕр – нуша: кĕтÿ ансанах выльăх ялтан уялла тапса сикет, çын çĕрĕ çине те кĕрсе каять. Пуçланать вара вăрçăнасси...»

«Ялта сăнчăртан вĕçерĕннĕ йыт-качка йышланса кайнă, – **малалла пуплерĕ карчăкĕ.** – Пĕр кун ферма патĕнче кĕртленетчĕç, çамрăк выльăха кĕтĕве ярсан ак çулăхма та пуçлĕç».

Толиккасси кĕтÿçĕпе Нина Николаевапа курса калаçрăм. «Пенси илетĕп, ĕне хĕрине «пăрса çÿреме» килĕшмелле марччĕ-ха ман, – **терĕ вăл.** – Ĕç укçи пĕчĕк, хăшĕ-пĕри пĕлтĕр кĕтÿ кĕтнĕшĕн те тÿлемен, çавăнпа ĕçлес кăмăл çукрах...».

Çапла карĕ пулин те кăçал та кĕтме килĕшет. Пухура халăхпа ĕçшĕн мĕнлерех тÿлессине, выльăха ăçта çÿретессине, ыттине калаçса хумалли юлнă.

Халĕ кашни ял тăрăхĕнчех ял кĕтĕвне уя кăларассипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухаççĕ. Кунта йывăрлăхсем, çитменлĕхсем çук мар.

Ю.ЮМАН.

## 580 ГЕКТАРА - ПУСĂ ÇАВРĂНĂШНЕ

Пирĕн районта усă курман çĕр 1316 гектар шутланса тăрать. Чи пысăк лаптăк, 1043 гектар, Çырмапуç ял тăрăхĕн территорийĕнче. Çавсем – харпăрлăхри тата арендăри çĕрсем. Кăçал çав шутран 369 гектарне «Саяны» АСК» общество пусă çаврăнăшне кĕртĕ. 150 гектар çинче вăл çурхисене акма палăртать, 219 гектарне – кĕрхисене. Пусă çаврăнăшне кăçал çавăн пекех «Дружба» предприяти территорийĕнчи усă курман – 188, «Искра» хуçалăхри – 21, «Славăри» 2 гектар çĕре кĕртмелле.

В.АВЕРКИЕВА.

## «СТЕНДА КĂЛАРСА ПĂРАХМАН»...

Нумаях пулмасть «Искра» кооперативăн директорĕпе Н.Е. Смирновпа курса калаçма тиврĕ. Çур аки пирки сăмахларăмăр. Çуртрисем 360 гектар йышăнмалла-мĕн вĕсен.

Хуçалăх малашне те ĕне-выльăх тата сысна ĕрчетессипе тимлесшĕн. «Сыснасем патĕнче ама шутне ÿстерме палăртатпăр», – пĕлтерчĕ Николай Евтихеевич.

«Тăван Енĕн» 19-мĕш номерĕнче «Кашни каçах килетĕп» материалта хуçалăхăн «Хисеплĕ ĕç ветеранĕсем» стендне «кăларса пăрахни», ăна вара клубра майлаштарса çакни пирки каланăччĕ... «Вăл стенд хуçалăх кантурĕнче, коридорта, çакăнса тăнă. Библиотекăра юсав ĕçĕсем тытăнсан стенда вăхăтлăха илсе хунăччĕ. Ялти культура çуртĕнче юсав ĕçĕсем пĕтсен, уçас умĕн директорĕ Александр Афанасьев çав стенда вăхăтлăха ыйтрĕ. Эпир килĕшрĕмĕр. Анчах стенда кăларса пăрахас шухăш, паллах, пуçра та пулман, тĕрĕс мар каланă сăмах вăл. Халĕ ăна эпир культура çуртĕнчен илсе хамăр кантур коридорĕнче çĕнĕрен вырнаçтарăпăр», – терĕ Николай Евтихеевич.

В.ТИТОВА.

РЕДАКЦИРЕН: Чăн та, хуçалăх ветеранĕсен стенчĕ пирки икĕ тĕрлĕ каланине пичетлеме тивет. Кунпа, паллах, мухтанма çук. Анчах хамăр енчен аса илтеретпĕр: ун чухне каланине те кавычкăра çырнăччĕ, мĕншĕн тесен вăл культура çурчĕн директорĕн, яваплă çыннăн, сăмахĕ пулнă. Халь, акă, стенд пирки – тепĕр майлă шухăш. Мĕншĕн апла пулса тухрĕ. – ку пирĕншĕн те усăмсăр ыйту.

**Фадей КОНСТАНТИНОВ**

**Калам-ха хамăн шухăша**

## САМАХĂМ – ЯЛ КĔНЕКИСЕМ ПИРКИ

*(Малалли. Пуçламăшĕ 9486-мĕш номерте).*

### «ШКОЛА МОЕЙ ЖИЗНИ»

Кĕнеке авторĕ – Ишек ялĕнче пурăнакан Г.С.Соловьева. Унта Ишек шкулĕн 160 çулхи ĕç-хĕлне сăнласа панă. Шкул çинчен пулин те кăларăма ял кĕнекисен шутне кĕртме пулать, мĕншĕн тесен Ишек ялĕн аваллăхĕ пирки каласа пани чылай. Ишек шкулĕнче ĕçленисемпе халĕ тăрăшакансемшĕн тата хăй вăхăтĕнче унта вĕреннисемпе паян ăс пухакансемшĕн паха та ырă ĕç.

### «С РОДИНОЙ В СЕРДЦЕ»

Çакăн пек ятпа пичетленсе тухнă Галина Соловьеван тепĕр кĕнеки. Ăна Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 60 çул çитнине халалланă. 1943-1948 çулсенче Ишек ялĕнче блокадăри Ленинград хулинчен куçса килнĕ тăлăх ачасене валли ача çурчĕ ĕçленĕ. Кĕнекере автор çав çурт пирки те, унта пурăннисен аса илĕвĕсене те, 40 çултан тĕл пулни çинчен те каласа кăтартнă. Вăрçăра çапăçнисен, тыл ĕçченĕсен аса илĕвĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

«Школа моей жизни» тата «С Родиной в сердце» кĕнекесен авторĕ Г.С.Семенова И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститут пĕтернĕ. Марксизмпа ленинизм университетĕнче, обществăлла корреспондентсен университетĕнче кусăмсăр майпа вĕреннĕ. 1981 çултанпа Ишек шкулĕнче ĕçлет. Чăваш Республикин хисеплĕ таврапĕлÿçи. Ишекри краеведени музейĕнче обществăлла майпа 16 çул ертÿçĕ пулнă. Тăватă кĕнеке авторĕ.

*(Вĕçĕ çитес номерте.)*

# АЧАСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

## КОСМОСА ВĔÇЕС ĔМĔТ ÇУРАЛЧĔ

***Пирĕн республикăра «Пире космос чĕнет» ятлă космос юхăмĕ ĕçлет, унта 40 отряда яхăн кĕрет. Çавсенчен пĕри Тутаркасси шкулĕнче вырнаçнă. Вăл иртнĕ çултан Муса Манаров ячĕпе хисепленсе тăрать.***

«Республикăри отрядсем пурте тенĕ пекех Николаев, çавăн пекех Бударин ячĕпе хисепленсе тăраççĕ. Пĕлтĕр пирĕн алла «Добрая дорога детства» хаçат лекрĕ. Унта эпир Манаров çинчен вуласа пĕлтĕмĕр. Космосра чи нумай пулнипе ăна Гинесс кĕнекине кĕртнĕ, Улатăр хулинче 10-мĕш класс вĕренсе пĕтерни çинчен аттестат илнĕ вăл. Апла вăл – пирĕн ентеш», – терĕ отряд ертÿçи, 7-мĕш классен руководителĕ Альбина Ишова. Отряд членĕсем çак хаçатранах Муса Манаров пирĕн ентешсенчен иккĕмĕш космонавт пулнине пĕлнĕ. Ку таранччен Чăваш Енри иккĕмĕш космонавт Николай Бударин тесе шутланнă. «Çакна цифрăсем çирĕплетсе параççĕ. А.Николаев чăвашран пĕрремĕш космонавт пулни паллă. Кунта иккĕленÿ те çук. Анчах ентешсенчен Н.Бударин 1995 çулта, М.Манаров вара 1987 çулта космоса вĕçнĕ», – ачасем çакна пĕлнишĕн савăннине пытараймарĕç.

Пирĕн ентешсенчен иккĕмĕш космонавт ятне илессине пĕлтерсе Тутаркасси шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекенсем Муса Хирамановичпатне çыру та çырса яраççĕ. Çак утăм кĕтменлĕхе çаврăнать – космонавт хурав парас вырăнне хăй шкула килет. Иртнĕ çул кун пирки «Тăван Енре» çырса пĕлтернĕччĕ. Çак тĕл пулура отряд альбомĕ автортан юлнă 36 фото ÿкерчĕкпе пуянланать. Çавăн пекех 3 çул тытса пыракан альбомра 50 яхăн Хисеп грамотине Дипломвырăн тупнă. «Республикăри юхăм тĕрлĕ конкурс ирттерет. Унта ачасем хутшăнса палăраççĕ», – терĕ Альбина Валентиновна. Акă, иртнĕ çул Александр Павлов ÿкерчĕксен конкурсĕнче республикăра висçĕмĕш вырăна тухнă. Унăн ĕçне календарь çине те кĕртнĕ. Кăçал мартăн 27-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 2-мĕшĕччен Мускавра космос темипе çыхăннă наука конференцийĕ иртнĕ. Унта Тутаркассинчи отрядран Алексей Кузьмин, Анна Бодрова, Анастасия Иванова хутшăннă. Вĕсене «Астрономия тата космос», «Космонавтика аталанăвĕн историйĕ» секцисене хутшăннă тесе свидетельствăсем панă. Алеша Скворцов вара Байконур космодромран «Союз ТМА-12» космос карапĕ уçлăха вĕçсе кайнине Казахстанран пăхнă.

Арçын ачасем хăйсен шухăш-кăмăлĕсем пирки çул çÿрев хыççăн акă мĕнле каласа кăтартрĕç.

**Алеша Скворцов:** «Таможньăра 3 сехет ытла ура çинче тăтăмăр. Унта кашнинех тĕрĕслеççĕ. Тата самолетпа вĕçнĕ чухне килĕшрĕ. Казахстан çийĕн пынă чухне кÿлĕсем сĕлтен хитре курăнаççĕ. Корейăран питĕ нумаййăн килнĕ. Ара, карап çине 28 çулхи Ли Со Ен та ларнăччĕ. Пурте пĕрле Николай Бударинпа асăнмалăх фото ÿкрĕмĕр. Эпĕ тата хам тĕллĕн çак вĕçеве ÿкерме килнĕ акăлчанпа та сăн ÿкерттертĕм. Ракета вĕçсе кайнă самант – чи асра юлни. Питĕ вăйлă шав тăчĕ вăл вăхăтра, хăлхасене хупласан та унран çăлăнма çук. Икĕ кунра йĕркеллĕ çывăрман та, питĕ йывăра килчĕ, апла пулин те çак çул çÿревшĕн пĕрре те ÿкĕнместĕп, çавăн пекех космоса вĕçсе каяс ĕмĕт çуралчĕ».

**Алеша Кузьмин:** «Пĕрремĕш хут поезд çине ларса куртăм. Хавхаланупа хăпартлану – чи çивĕч туйăмсем пулчĕç. Конференцире нумай паллă ăсчахсем пухăннă. Вĕсен умĕнче тухса калаçма малтанласа шиклентерчĕ те. Эпĕ тÿрех икĕ секцире хамăн наука ĕçĕсемпе паллаштартăм. Килес çул та хутшăнас кăмăл пысăк».



Алексейсем – космос çинчен нумай пĕлекенсем.

## ТĂВАН ЧĔЛХЕНЕ ЛАЙĂХ ПĔЛЕÇÇĔ

«Чăваш чĕкеçĕ – чĕвĕлти чĕкеç» конкурс ирттерсине пĕлсен унта пирĕн районти вĕренекенсем те хутшăнчĕç. 4 республикăран 3-11-мĕш классенче вĕренекенсем 14349-ăн чи нумай пĕлекенсен йышне кĕрессишĕн тупăшрĕç. Нумаях пулмасть конкурса пĕтĕмлетнĕ. Мĕнех, пирĕн районти хăшпĕр вĕренекенсем тĕлĕшпе те ăнăçу юнашар тăнă. Жюри Чăваш Енри ачасенчен 19-шĕн ĕçне лайăххипе палăртнă пулсан, вĕсенчен висççĕшĕ пирĕн район вĕренекенĕсен: Тутаркассинчи Алексей Кузьмин (7-мĕш класс), Çĕньялти Екатерина Виноградова (7-мĕш класс), кунтанах Геннадий Захаров (8-мĕш класс).

Апрелĕн 1-5-мĕшĕсенче чăваш чĕлхипе тата литературипе интернет-олимпиада иртнĕ. Сайт çине вырнаçтарнă И.Я.Яковлевпа çыхăннă 12 ыйтăва хуравласа Чăрăшкассинчи Дмитрий Шнуров 10-мĕш классем хушшинче 2-мĕш вырăн йышăннă. Çĕнтерÿçĕсене саламлатпăр!

## ПЫСĂК ĔМĔТЛĔ ÇАМРĂК ЮРĂÇ

***Çамрăк чух çанă тавăрса ĕçлесен пурнăç çулĕ çинче те çăмăл пулĕ. Янăшра пурăнакан Аня Александрова çакна пĕлекен çамрăксенчен пĕри.***

Аня 7-мĕш класра вĕренет пулин те пур çĕре те ĕлкĕрме тăрăшать: театр кружокне, унсăр пуçне тĕрĕс юрлама вĕренме. Чăн та, Аньăн илемлĕ сассисĕр иртмест тĕрлĕ мероприяти. «Шкул 100 çул тултарнине нумаях пулмасть паллă турăмăр. Çак уяв манăн асра юлчĕ. Юрă юрлама, ташлама, сăвă калама та ĕлкĕрес пулать. Хăнисен йышĕ пĕчĕк пулмарĕ ун чух», – аса илет хĕрача.

Шкул хыççăн Аньăна клуб ĕçченĕсемпе пĕрле клубра тĕл пулма пулать. Кунта вăл черетлĕ конкурса е уява хатĕрленет. «Нумай яла концертпа çитсе куртăм, ярмăркка, акатуй уявĕсенче сцена çине тухнă. Районти конкурссем чуна хумхантараççĕ. «Лейся, песня» конкурсра 1-мĕш вырăна тухма пултарнишĕн чунтан савăнтăм», – терĕ Аня.

Çитĕнÿсем тунă хыççăн та Аня лăпланса лармасть, малалла талпăнать. Шкул хыççăн музыка училищине вĕренме каяс ĕмĕтпе пурăнать. Эстрадăна туха паллă юрăç пулма ĕмĕтленет. Ăнăçу сана, Аня.

С.АЛЕКСЕЕВА.

**Комисси материалĕсем тăрăх**

## РУЛЬ УМНЕ ЛАРАСШĂН

ÇЫВĂРСА ТĂРАНАЙМАННИПЕ СКАНДАЛ

Апрелĕн 9-мĕшĕнче шалти ĕçсен пайĕнчи дежурнăй чаçне шăнкăртаттараççĕ. Кÿкеçри Г.-сен çемйинче çилтăвăл кĕрлет имĕш. Ирхине çул çитмен ачана амăшĕн йăмăкĕ шкула вăратма пуçлать. Çамрăкăн ыйхи йывăр пулнă-ши, аппăшĕпе хирĕçсе каять. Чышкă та хута каять. Халĕ чавса çывăх та, çыртма çук. «Урăх ун пек тумастăп», – сăмах пачĕ арçын ача комисси членĕсене.

«ЙЫТĂ ÇЕÇ-И»

Кирек мĕнле арçын ачан та руль умне ларса курас килет. Анчах Кÿкеçри Е. çак ĕçе аслисенчен ыйтмасăр пурнăçланă – ашшĕ килте çуккипе усă курса юлташĕпе кÿршĕ яла машинăпа каяççĕ. Анчах водитель унта пĕрисен ăратлă йытти таптать. «Права илмесĕр урăх машина çине лармастăп», – терĕ вăл комисси членĕсем умĕнче. Пĕр йăнăшне ăнланчĕ, анчах та каччă йытта таптани пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланасшăн пулмарĕ. «Пĕчĕк йытă çеç-иç», – текелеме пăхрĕ. Халь каччăн ашшĕпе амăшĕн 3 пин тенкĕ кăларса хумалла. Иккĕмĕшĕнчен, пĕчĕк йытă вырăнне пĕчĕк ача пулнă пулсан... Атăльялĕнчи К. та правасăрах руль умне ларнă. Шомикрен дискотекăран таврăнасшăн пулнă. Çитменнине, вăл сăра та ĕçнĕ пулнă. Юрать-ха, пакунлисем тытса чарнă.

«ЭПĔ ИКĔ ВЫРĂНТА ĔÇЛЕТĔП»

Çапла калать Ишлейри Л. амăшĕ. Çавна пулах унăн çул çитмен ачине воспитани пама вăхăт юлмасть те ĕнтĕ. Шкулти ашшĕ-амăшсен пухăвне çÿренĕ пулсан ывăлĕ 172 урок сиктернине те пĕлĕччĕ. 14 çулхи ывăлне аслисемпе пĕрле ирхине 3 сехет çитеспе «Хачăк» чарăнура тытнă. Джин-тоник ĕçнине те палăртнă. «Эпĕ ăна ирхине 2 сехетчен урамра çÿреме ирĕк паратăп», – текелес комисси членĕсене хирĕçлесе ывăлне хÿтĕлеме те пăхрĕ амăшĕ. 18 çул тултарманнисен çĕрле 11 сехетрен урамра уçăлса çÿремелле маррине ăнлантарнă, çурçĕр хыççăнхи çул çÿревсем нумай чухне саккунла хирĕçле ĕçсем тунипе çыхăннине тĕслĕхсем илсе кăтартса панă хыççăн тин лăпланчĕ хĕрарăм.

КĂЛАРСА ЯМА ТА ПУЛТАРĔÇ

Тренккассинчи К.-н çывăх вăхăтра пĕрремĕш тата иккĕмĕш çур çулшăн нумай предметпа оценкăсене тÿрлетмелле пулĕ. Унсăрăн Кÿкеçри 27-мĕш училищĕрен те кăларса яма пултарĕç. Каччă юлашки хут училищĕре хăш кун пулнине те калаймаççĕ. Кунти вĕрентекенсем октябрь уйăхĕнче ăна пĕрре те курман, ноябрьте 2 кун, декабрьте çур кун, январьте 3 кун, февральте 11 кун... пулнă. Çак вĕренме çÿремен хушăра саккуна хирĕçле ĕç туни пирки палăртрĕç комисси членĕсем – ялсенче трубасем вăрланă иккен.

**Страницăна А.СУСМЕТОВА хатĕрленĕ.**

## ТĔНЧЕ КУБОКНЕ УÇĔÇ

Çĕнтерÿ кунĕнче е «Улăп» центра уçнă чухне параппан çапакансене курнă ĕнтĕ. «Илем» бал ташшин халăх ансамблĕн балетмейстерĕ В.Васильева ертсе пынипе хĕрсем пурте пĕр харăссăн патаксемпе çапса хусканусем туса халăха тыткăнлаççĕ. Барабанщицăсем пурте шкулта çеç вĕренеççĕ-ха, апла пулин те



вĕсене пысăк уявсене уçма шанаççĕ. Кашнинче тенĕ пекех Республика кунĕнче вĕсем Хĕрлĕ лапама параппан çапса анаççĕ. Хальхинче вара хĕрсем çак куна кĕтмĕç, майăн 9-мĕшĕнчех вĕсене тĕп хулара курма пулĕ. «Хăвăрт утассипе Тĕнче Кубокне уçмалла пулĕ пирĕн, çавна май халь хĕрсех репетицисем ирттеретпĕр», – терĕ Валентина Евлампьевна балетмейстер. Апла, хамăр ентешсене, 22 параппан çапакана, нумай çĕршывран килекен спортсменсемпе курма килнисен чĕрисене тыткăнлама ăнăçу сунар.

**Ыйту-хурав**

## ЭКЗАМЕНСЕМПЕ ВАРИАНТСЕМ ПУР

***Кăçал патшалăх пĕрлĕх экзаменĕсене мĕнле предметсемпе тытмалла пулĕ? Тата физкультура предметне выпускной экзамен пек суйласа илме юрать-и?***

– Патшалăх пĕрлĕх экзаменĕсене ирттерессипе республикăри нормативлă документсене хăш-пĕр улшăнусем кĕнĕ. Пур выпускной экзаменсенчен (вĕсем 5-рен сахал мар, 6-ран нумай мар пулмалла) вырăс чĕлхипе математикăна обязательнăй майпа пур ачан та тытмалла. Унсăр пуçне патшалăх пĕрлĕх экзаменĕ пек тытма физика, хими, биологи, географи, Раççей историйĕ, обществознани, ют чĕлхе, информатика, ИКТ суйласа илме пултараççĕ. Ăнланмалларах пултăр тесен: çак дисциплинăсемпе çеç патшалăх пĕрлĕх экзаменĕн форми пур. Сăмахран, ача историпе француз чĕлхине суйласа илсен вăл экзамена традициллĕ формăпа мар, патшалăх пĕрлĕх экзаменĕн формипе тытать.

Физкультура предметне ача выпускной экзамен пек суйласа илме пултарать, анчах вăл яланхилле формăпа иртĕ. Çавăн пекех яланхилле формăпа 11-мĕш класра вĕренекен ОБЖ, вырăс литератури, чăваш шкулĕсенче чăваш литератури предмечĕсемпе тытма пултарать. Сăмах май, кăçалтан вырăс литературипе экзамен тытасси обязательнăй майпа пулмĕ. Ку предметпа экзамен мĕнле тытассине шкул йышăнăвĕнчен килет: е билетпа, е реферат хÿтĕлесе, е собеседованипе.

# ПУÇ ХУНИСЕНЕ АСĂНСА

Афганистанра интернациллĕ тивĕçе пурнăçласа пуç хунă Г.Калинина, А.Сорокина, О.Иванова, Г.Федорова, Е.Павлова тата В.Кудряшова асăнса апрелĕн 25-мĕшĕнче Кӳкеçре волейболистсен уçă турнирĕ иртрĕ. Унта хутшăннисене Пĕтĕм Раççейри «Боевое братство» организацин республикăри уйрăмĕн ертӳçи И.Кашаев саламларĕ, çамрăк ăрăва Афганистан вăрçине хутшăннисен паттăрлăхĕпе паллаштарас, район çыннисене спортпа физкультурăна хутшăнтарас тĕлĕшпе тăрăшнăшăн М.Хлебнов, А.Федотов, В.Владимиров, В.Аврамов тата О.Ямашев ветерансене «Боевое братство» медальпе наградăларĕ. Спортсменсене ăмăртăвăн тĕп спонсорĕ «Нектар» производство-коммерци фирми» обществăн генеральнăй директорĕ Н.Столяров ăнăçу сунчĕ. Турнирта «Слава» кооператив – 1, Шупашкарсем – 2, районти ветстанци – 3, Кӳкеçри 1-мĕш шкул – 4, Канашсем – 5, Çĕньялсем 6-мĕш вырăн йышăнчĕ. Ирĕклĕ ӳнерçĕ Н.Тарасов И.Зайцев спортсмена ятарлă парнепе савăнтарчĕ.

Çак турнир çуллен иртет. Кăçал та ăна салтак-интернационалистсен районти организацийĕн ертӳçи М.Хлебнов ертсе пынипе йĕркелерĕç. Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен «Чебоксарскагропромтехсервис» обществăпа «Катюша» кафе те пулăшнă.

Ю.МИХАЙЛОВ.



М.Хлебнов Афганистанра пуç хунă О.Иванов ашшĕне пулăшу конвервĕ парать.

# ÇЕМЬЕПЕХ ВУЛАКАНСЕМ ТЕ ПУР

Пархикассинчи модельлĕ библиотекăран халăх татăлма пĕлмест. Ватти-вĕтти пурте туртăнать. Çулĕпе чи аслă вулакан Яранкассинче пурăнать. 1929 çулта çуралнă К.В.Малышевана кĕнекесем килне илсе кайса параççĕ. Клавдия Васильевна чăвашла кĕнекесемпе журналсене «шĕкĕлчет» иккен. Чи çамрăк кĕнеке тусĕ – Никита. Ильинсен ывăлĕ картинкăсене пăхма кăмăллать, майĕпен шăкăртаттарса вулама та пуçласшăн. «Çулсерен кам мĕн чухлĕ кĕнеке вуланине палăртса пыратпăр. 3 çул каялла «Нумай вулакан çемье» номинаци те пулчĕ. Унта Митрофановсем мала тухрĕç. Вĕсем паян та вулавăшран тухма пĕлмеççĕ», – тет библиотека заведующийĕ Г.Мочалова.

Галина Петровна çивĕч ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕ. Сентресем çинче художествăлла литература сахалтарах иккен. Май килнĕ таран çак çитменлĕхе пĕтерме тăрăшаççĕ. Акă, Ыра ĕçсен çулталăкĕнче Пархикассинчи В.В.Васильева библиотекăна 10 хулăм кĕнеке килсе панă. Венера Витальевнан парни – Ридерз Дайджест романĕсем – шеп те вырăнлă пулнă. Çавăн пекех хаçатжурнал сахал пулни те пуçа хыçтарать. «Хальхинче ял тăрăхĕ 930 тенкĕ çеç уйăрнă çав. Чи хакли те 163 тенкĕпе «Тăван Ен» çырăнтăмăр. Хисепĕ нумайрах пултăр тесе чи йӳннисене суйлама тăрăшрăм. Халь тепĕр çур çула суммине пысăклатнă терĕç», – пĕлтерчĕ Г.Мочалова.

А.СУСМЕТ.

# ЛАЙĂХА ВĔРЕНТЕÇÇĔ

***Кăрмăшри «Калинушка» ача садĕнче ĕçлекенсем вырăс тата чăваш халăх йăли-йĕркине хисеплеме вĕрентес тĕлĕшпе пекексемпе тăтăшах тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ.***

Сăмахран, апрелĕн 7-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсем кайăк праçникне (Пăлхавăшни – Благовещение) уявлаççĕ. «Пăлхавăшни кунĕнче тамăкри çынсене те асаплантарман», – тенĕ ваттисем. Аслă ушкăна çӳрекен ачасем кайăк праçникне кăсăклă ирттерчĕç. Вырăс халăх сарапанĕсене тăхăннă пĕчĕк чиперккесемпе «кайăксене» çавраннă маттур «пĕчĕк яшсем» курма пуханнă ашшĕ-амăшĕсемпе кĕçĕнрех ушкăнри юлташĕсене хăйсен пултарулăхĕпе самаях тĕлĕнтерчĕç: пĕчĕккерсем кăвайт урлă вăшт та вăшт кăна сике-сике каçрĕç. Çакă чир-чĕртен тасалма пулăшать имĕш. Чиплĕхри кайăксене (хутран тунисене ĕнтĕ) усăлха вĕçтерчĕç. Ваттисем калан тăрăх, шăпах кайăксем хăйсен çунатти çине çуркуннене лартса килеççĕ.

Тĕрлĕ юрă, ташă нумай пулчĕ уявра. Н.В.Маткина музыка ертӳçипе В.В.Процко воспитатель уява тĕплĕн хатĕрленни куçкĕрет.

«Çынна ырă туни хăвна та ырăпа çавăрнса çитет»,- теççĕ халăхра. Çак каларăша тĕпе хурса ĕçлет те «Калинушка» ача сачĕн коллективĕ. Кунта иртекен кашни мероприятие вĕсем ырăпа çыхăнтараççĕ, çитĕнекен ăрăва лайăха вĕрентессе тĕп тĕллев вырăнне хураççĕ.

Р.ЧЕРНОВА.

Суд

# УКÇА ТУРТСА ИЛНĔШĔН

Следстви М.Мешков (1979 ç.ç., Чантăртан), Е.Гаврилов тата Е.Леонтьев (иккĕшĕ те Шупашкартан) 2006 çулта «М-7» автотрассăн Хыркассинчи чарăнăвĕнче канма чарăннă çынсене хăратса вĕсенчен укçа туртса илнине – икĕ преступлени тунине – çирĕплетнĕ. Следстви палăртнă тата палăртайман çамрăксен ушкăнĕпе Мешков Хыркасси çулĕ çинче проституцирен укçа тунă 6 хĕрсĕн куллен Н.Воронковаран 100-шер тенкĕ тăпалтарнă, «каçхи лĕпĕшсен» 2007 çулхи январьччен пухса парса тăма тивнĕ. Преступниксен йĕркеленнĕ ушкăнĕ Хыркассинчи чарăнура канма чарăннă 18 çынна е вăйпа, е автомашинăсăр хăварассипе хăратса вĕсенчен 50–80-шар тенкĕ туртса илнĕ. Апрелĕн 3-мĕшĕнче район сучĕ преступлени тунăшăн Гаврилова 8 çул та 9 уйăха, Леонтьева 7 çул та 9 уйăха, Мешкова 10 çула ирĕклĕх прависĕр хăварма тата кашниннех 30 пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăнчĕ. Чăн та, вĕсем уголовнăй ĕçе кассаци йĕркипе пăхма ЧР Аслă судне тавăç тăратнă.

В.ГАВРИЛОВА, район прокурорĕн аслă пулăшуçи.

# ЭТЕМ ИРĔКЛĔХНЕ ХĔСНĔШĔН

2007 çулхи декабрьте Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Э.Николаев (1966 ç.ç.) Н.Белова Çĕньялти гаражра шыраса тупнă, питĕнчен çапнă, урайне ӳкерсе тӳнккенĕ, аякĕн 3 шăммине хуçнă, электричество пралукĕпе алли-уринчен çыхса хăварнă. Сивĕ бетон урайĕнче Белов 2 сехете яхăн шăнса выртнă, хăех капкăнтан хăтăлса килне çитнĕ, анчах ура пӳрнисене шăнтнăскере тата хуçăк аяклăскере хваттерне кĕртмеççĕ. Подъездра вăл икĕ çĕр каçнă, ура пӳрнисене пачах туйман. Ăна Çĕньял ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Е.Зубков тата Л.Парамонова медсестра пырса пăхман пулсан мĕн кĕтетчĕ-ши? Белова больницăна ăсатаççĕ. Унта хăйне кĕрӳшĕ хĕненине тата çыхса пăрахнине пĕлтерет. Пациент пӳрнисене татма тивет.

Çак преступление республикăри следстви управленийĕн Çĕнĕ Шупашкарти следстви уйрăмĕн следователĕ А.Игнатьев тĕпченĕ. Район сучĕ Уголовнăй кодексра пăхнă икĕ статьяпа преступлени тунăшăн Э.Николаева 4 çул та пĕр уйăха ирĕклĕх прависĕр хăварма йышăннă.

А.МОИСЕЕВ, район прокурорĕ.

# УПĂШКИНЕ ВĔЛЕРНĔШĔН

Çак усал хыпара хăй вăхăтĕнче район хаçачĕ пĕлтернĕччĕ. Апрелĕн 16-мĕшĕнче ЧР Аслă сучĕ Шупашкарти А.Бахтерова ĕçне пăхса тухрĕ.

2005 çулхи июнь уйăхĕнче Юрăпа Алевтина, иккĕшĕ те аллă çултан иртнĕскерсем, хуларан пирĕн районти дачăна килеççĕ. Упăшкипе арăмĕ вăрçăннă хыççăн упăшки нӳхрепе аннине сыхласах тăнă арăмĕ нӳхреп алăкне шалт! питĕрсе илет. Малтанхи кунсенче упăшкине алăк хушăкĕнчен çиме паркалать, арçын 7 талăкран шăпланать. Ашшĕне ăçта чикнине çулталăк иртсен ывăлĕ умĕнче персе ярать. Çаппа пĕлнĕ усал хыпара право йĕркине сыхлакансем.

Суд Ю.Бахтерова нӳхрепе хупса хурса вилĕм патне илсе çитернĕшĕн Алевтинăна 9 çула ирĕклĕх прависĕр хăварма йышăнчĕ.

А.ИВАНОВ, район прокурорĕн çумĕ.

# ТУСЛĂ ПУРĂНАÇÇĔ

***Туслăн килĕштерсе ĕçлеççĕ пĕр-пĕринпе Шоркка ялĕнчи вулавăш тата ваттисемпе фольклор çурчĕсем. Драма кружокне çӳрекенсем нумаях пулмасть ветерансен патĕнче А.Суханăн «Вĕрентеççĕ арăмсем» мыскарине лартса пачĕç.***

Унччен малтан кунта вулавăшра вăй хуракан С.Толстова тутар халăхĕн паллă çыравçи З.Баширов çырнă «Чăваш хĕрĕ Унисçе» повеç сыпăкĕсене вуласа пачĕ. Ветерансен çурчĕн ертӳçи О.Дмитриева март уйăхĕн вĕçĕнче Колешшара иртнĕ смотр-конкурса хутшăннă Сарапакасси тата Лапсар ял тăрăхĕсен коллективĕсене «Большая книга поздравлений» кĕнеке парнелерĕ.

В.ЖУРАВЛЕВ.


## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

*Для обеспечения бесперебойной связью жителей Чебоксарского района Чувашской Республики планируется размещение:*

железобетонного столба высотой 30 м с размещением рядом контейнера-аппаратной станции сотовой связи "МТС" на земельном участке, площадью 42 кв.м., расположенном по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п.Кугеси, ул.Первомайская;

железобетонного столба высотой 30 м с размещением рядом контейнера-аппаратной станции сотовой связи "МТС" на земельном участке, площадью 32 кв.м., расположенном по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п.Новое Атлашево, ул.Промышленная.

Данная аппаратура не имеет отрицательного воздействия на окружающую среду и здоровье человека, не имеет санитарно-защитной зоны.

Представителем заказчика строительства вышеуказанных объектов является филиал ОАО "МТС" в Чувашской Республике.

Настоящим администрация Чебоксарского района информирует о предстоящем выделении в аренду вышеуказанных земельных участков.

Информацию по оценке воздействия строительства данных объектов на окружающую среду можно получить по тел. (831) 416 97 80. Свои вопросы можно также направлять в администрацию Чебоксарского района, в течение 30 дней со дня опубликования статьи в печати.

***Требуются монолитчики, каменщики, отделочники, мастера, прорабы, начальники участка, главные инженеры. Тел. 8-903-358-84-34 и 8(8352)44-84-14, электр. адрес: euro.style@list.ru.***

**ООО «Радуга» срочно *требуются* пекаря, кондитера.**
***Тел.*: 2-13-97, 2-15-06, 2-15-95.**

**Предполагается** строительство водопроводной сети от колодца около УМ-2 до 72 квартирного жилого дома в д.Сятракасы по ул.Центральная, д.2, корп. 1 на землях Лапсарского сельского поселения Чебоксарского района площадью 0,2 га. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, тел.(8-835-40) 2-15-92, администрация Чебоксарского района.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0241 га с кадастровым номером 21:21:07 02 02:0209, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Пихтулино, ул.Молодежная (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Участники долевой собственности** землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР Федотова Светлана Николаевна, Ванеева Клавдия Максимовна с земельными долями по 1,47 га пашни сообщают о выделении в поле №5 третьего полевого севооборота рабочего участка №1 к западу от с.Анат-Киняры. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***


**Поправка.** *В газете «Тăван Ен» №№47-48 от 26.04.2008 г. на 6-ой странице в объявлении о торгах на заключении договоров аренды земельных участков по вине редакции прошла техническая ошибка. В начале объявления следует добавить абзац:* «На основании распоряжения главы Чебоксарского района от 24.04.2008 года № 058-р администрацией Чебоксарского района проводится открытый аукцион по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков, который состоится 29 мая 2008 года в 10.00 часов в зале заседаний администрации Чебоксарского района по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15».
*У читателей просим извинения.*

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 116 от 11.10.06 г. в объявлении о выделении земельной доли Смирновой Р.П. и др. после «55 га» следует читать «поле №1 полевого севооборота» и далее по тексту.

**Хаçатăн çитес номерĕ майăн 7-мĕшĕнче тухать.**


ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции.
За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 29.04.2008 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2530. Заказ №
Индекс газеты - 54820.